Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

86 (7511) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи октябрĕн (юпа) 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Районăн ĕçчен çыннисем



### Ялта ырă ятлă мăшăр

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Алина Михайловнапа Александр Михайлович Ефремовсем Чемей тăрăхĕнче пĕлмен ятсем мар. Çынпа калаçма та, ĕçлеме те пĕлеççĕ çамрăксем, çынна пулăшас ĕçре те айккинче юлмаççĕ. Çавăнпах хисеплет вĕсене ял-йыш. Акă Алина вуннăмĕш çул йывăр чирлĕ пиччĕшне опекун пулса пăхса пурăнать, пĕр ача ӳстерет. Унăн мăшăрĕ чăн-чăн ял хуçалăх ĕçченĕ. Малтанхи çулсенче общесвăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче кочегарта, тислĕк кăларнă çĕрте вăй хунăскер, халĕ авă 9-мĕш çул Çĕмĕртлĕх Чемейри сĕт ферминче машинăпа ĕне сăвать, япăх мар кăтартусем тăвать. Виçĕм çул арçын-операторсем хушшинче республикăри ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухни те Саша тĕрĕс çул суйласа илни пирки калать. Тĕп хаклав вара – ял хушшинче ырă ят хăварни.***

*Анатолий БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

## Раççейре

### Декабрĕн 1-мĕшĕнчен пенси 300 тенкĕ ӳсет

РФ Президенчĕ В.В. Путин кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пенси укçине 300 тенкĕрен кая мар ӳстерме правительствăна хушу панă.

Октябрь уйăхĕнчен кăна пенси ӳстернĕччĕ. Вăтамран 150 тенкĕ ытларах. Анчах хаксем ӳсни ватăсене каллех йывăрлăха кĕртсе ӳкерчĕ.

Малтанласа палăртнă тăрăх пенсие тепĕр хут çитес çулхи апрель уйăхĕнче хăпартмаллаччĕ. Иккĕмĕш хут – çав çулхи октябрьте. Пĕтĕмĕшле илсен 300 тенкĕ чухлĕ.

В.В. Путин вара пенсие хайхи 300 тенкĕ чухлĕ кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнченех ӳстерме кирлине палăртрĕ. РФ Патшалăх Думин депутачĕсем ку ыйтупа саккуна виçĕ вулавпа çак эрнерех йышăнас шанчăк пур.

Апла пулсан ватăсем пысăклатнă пенсие декабрьтех илĕç. Çавăн пекех ватăсене январь уйăхĕшĕн тивекен пенсие те декабрьтех тӳлеме шантараççĕ.

## Республикăра

### Бюджетăн хушма тупăшĕсем тĕп çул-йĕре тытса пыма май параççĕ

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров республика Правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикипе архив ĕçĕн тата вĕрентӳпе çамрăксен политикин министрĕсем Наталья Володина, Галина Чернова, çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕ Сергей Дринев хăш-пĕр полномочие федераци шайĕнчен регионсене панă тата Раççей Правительствинче улшăнусем пулса иртнĕ май министерствăсен ĕçне йĕркелемелли плансем çинчен пĕлтернĕ. 2008 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ĕçре чăрмавсем ан пулччăр тесе Николай Федоров çывăх вăхăтрах управлени тата йĕркелӳ енĕпе йышăнусем тума хушнă.

Финанс министрĕ Николай Смирнов республикăн кăçалхи бюджетне улшăнусем кĕртесси çинчен пĕлтернĕ, çапла палăртнă: “Хушма тупăшсем пур, çапла вара тĕп çул-йĕре пурнăçлама хушма укçа-тенкĕ те тупăнать”.

Планеркăра çамрăк специалистсене ялсене ярас тĕлĕшпе муниципалитет влаçĕсен кадр политикине сӳтсе явнă. Чăваш Республикин Президенчĕ ку енĕпе районсен пуçлăхĕсем çителĕксĕр ĕçленине, çак ĕçе вăйлатмаллине палăртнă.

**ЧР ПА пресс-службы.**

## РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнче

# Хăшне суйласа илесси – сирĕн ирĕк

***2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Раççей Федерацийĕн çĕнĕ пенси законодательстви вăя кĕчĕ. Пенси фончĕн районти управленийĕ те унпа килĕшӳллĕн ĕçлесе пырать. Унта палăртнă тăрăх ĕç пенсийĕ малашне виçĕ пайран тăрать: база пайĕнчен, страхлакан пайран тата пухăнакан пайран. Район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн районти управленийĕн страхователсене тата страхланă çынсене ятран шута илекен тата вĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕпе О.Н. АЛЕКСЕЕВАПА тĕл пулнă май çынсене пенсисемпе тивĕçтерессипе çыхăннă хăш-пĕр ыйтусем çине хуравлама ыйтнă.***

**– Ольга Николаевна, кăçалхи май уйăхĕнчен тытăнса çынсем патне халăхра калакан «Телей çырăвĕсене» ярса пама тытăнчĕç. Тĕрĕссипе вара ку вăл харпăр хăйĕн лицевой счечĕн ятарлă пайĕ пирки пĕлтерни пулса тăрать. Мĕне пĕлтерет-ха ку çыру тата ĕç пенсийĕн пайĕсем пирки мĕн калană пулăттăр?**

– Ĕç пенсийĕн база пайĕ çыннăн ĕç-хĕлĕн кăтартăвĕсенчен килмест. Ăна Раççей Федерацийĕн Правительстви çирĕплетет тата вăхăтран вăхăта индексацилет. Пенсин страхлакан тата пухăнакан пайĕсем вара пачах урăхла. Вĕсене çирĕплетнĕ тата çĕнĕрен шутласа панă чух харпăр хăйсене шута илнин даннăйĕсене тĕпе хураççĕ. Вĕсен калăпăшĕ РФ Пенси фондĕнче патшалăх пенси страхованийĕпе страхланă кашни çыннăн лицевой счечĕ çине укçа мĕн чухлĕ куçнипе тӳрремĕнех çыхăннă. Харпăр хăйĕн лицевой счечĕн пĕтĕмĕшле тата ятарлă пайĕсем пур. Вĕсенче обязательнăй пенси страхованийĕ çине мĕн чухлĕ сумма куçарнине палăртаççĕ. Регистраци пирки страховани свидетельстви пĕлтерет. Унăн номерĕ харпăр хăйĕн лицевой счечĕн номерĕпе пĕр пек.

Çулталăк тăршшĕпе страхланă çын ĕçленĕ тапхăрта унăн ĕç стажĕ, ĕç укçи, Пенси фондне куçарса панă страховани взносĕсем пирки сведенисене çав çыннăн лицевой счечĕ çине кĕртеççĕ. Çавна та палăртмалла. Ĕç пенсийĕн страхлакан пайне финанслама каякан укçа-тенкĕне Раççей Федерацийĕн законодательствипе килĕшӳллĕн индексацилеме пăхнă, ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне финанслама каякан суммăна вара индексацилемеççĕ.

**– Çак вăхăта çӳлте асăннă çырусене миçе çын патне çитерсе панă-ха?**

– Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕ страхланă çынсене харпăр хăйсен лицевой счечĕсем пирки сведенисене ярса парать. 2007 çулхи май уйăхĕнчен тытăнса кун пек сведенисене 2006 çулшăн пĕтĕмпе страхланă 17 пине яхăн çынна ярса панă.

**– Калăпăр, ĕçлекен страхланă çынсенчен ытларахăшĕ кун пек çырусене илнĕ тейĕпĕр. Анчах та унпа мĕн тумаллине пурте пĕлеççĕ-и-ха?**

– Кунта 2002 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче йышăннă «Раççей Федерацийĕнче ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне финансламалли укçа-тенкĕне инвестици тумалли çинчен» 111 № тата 1998 çулхи майăн 7-мĕшĕнче йышăннă «Патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем çинчен» 75 № Федераллă саккунсем çинче чарăнса тăрас пулать. Сăмах вĕсенче страхланă çынсем хăйсен пенси виçине ӳстерме пултарасси пирки пырать.

**– Мĕнле майсем пур-ха çакна валли?**

Чи малтанах ертсе пыракан инвестици компанине суйласа илме пултарасси. Кунпа пĕрлех ĕç пенсийĕн пухăнса пыракан пайне йĕркелессине РФ Пенси фончĕ урлă мар, обязательнăй пенси страхованийĕн ĕçĕсене туса пыракан патшалăха пăхăнса тăман урăх пенси фончĕсем урлă туса пыма та шанма пулать. Пухăннă укçа-тенкĕне патшалăха пăхăнса тăман урăх пенси фондне парас пулсан вара страхланă çыннăн ку пенси фончĕпе килĕшӳ тумалла тата Раççей Пенси фондне заявлени çырса памалла. Çавăн пекех унччен ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне патшалăха пăхăнса тăман урăх пенси фончĕ йĕркелесе пынă пулсан, каялла Раççей Пенси фондне те куçма май пур. Кун пек чухне пухăннă суммăна Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕ патшалăхăн ертсе пыракан компанине куçарса парать.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Райадминистрацире

### Ĕçре пултарулă пулнăшăн

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, халăх вĕрентĕвĕн профсоюз организацийĕн районти канашĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2007 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнчи 469 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн – **Владимир Павлович НОВИКОВА**, Чуманкасси шкулĕн лаборантне.

2. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Любовь Степановна ГОРШКОВАНА**, Калайкасси шкулĕн ют чĕлхесен учительне;

– **Владимир Васильевич ЛЮЦЕВА**, Калайкасси шкулĕн физкультура учительне;

– **Александр Гурьевич ОБРУЧНИКОВА**, Шатракасси шкулĕн ют чĕлхесен учительне;

– **Олег Иосифович ТАРАСОВА**, Москакасси шкулĕн историпе обществознани учительне.

## Официально

**Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**

**11.10.2007 г.** **№ 8/74**-IV

г. Чебоксары

О заявлениях членов Моргаушской избирательной комиссии с правом решающего голоса Корнеевой Алевтины Фирсовны и Семеновой Ирины Валерьевны

В соответствии с пунктами 6, 10 статьи 29 Федерального закона “Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации” и на основании заявлений членов Моргаушской избирательной комиссии с правом решающего голоса Корнеевой Алевтины Фирсовны и Семеновой Ирины Валерьевны Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики постановляет:

1. Освободить Корнееву Алевтину Фирсовну от обязанностей члена Моргаушской избирательной комиссии с правом решающего голоса до истечения срока полномочий.

2. Освободить Семенову Ирину Валерьевну от обязанностей члена Моргаушской избирательной комиссии с правом решающего голоса до истечения срока полномочий.

3. Предложить политическим партиям, представительным органам муниципальных образований Моргаушского района, общественным объединениям, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы в срок до 18 октября 2007 года представить Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики предложения по кандидатуре в состав Моргаушской территориальной избирательной комиссии.

4. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

**Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики Л.Н. ЛИНИК.**
**Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики Е.Б. ШЕВЛЯГИНА.**

## Юбилей

### *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, Муркашра пурăнакан **Мария Прохоровна МАРТЫНОВАНА** октябрĕн 17-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр! Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхпе, тирпейлĕхпе палăрса тăратăн. Сана эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, ватлăху канлĕ пултăр. Пирĕншĕн яланах эсĕ ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пул.

Чи ачаш, чи илемлĕ, чи çепĕç
Сăмахсем çеç сана каласа
Саламлатпăр, юратнă аннеçĕм,
Чунтанах ырлăх-сывлăх сунса.
Мĕн тери ăшă кăмăллă, ырă
Эсĕ, хаклă аннеçĕм, ялан.
Эс пулсан юнашар – пурнăç çутă,
Сар хĕвел пек чуна ăшăтсан.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, икĕ кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**



Юратнă мăшăра, кăмăллă аннене, хисеплĕ тăвана – Ярославка ялĕнче пурăнакан **Людмила Владимировна КОЗЛОВАНА** пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе, ырлăх-сывлăх сунса пурнăçĕнчи паллă кунĕ ячĕпе - 55 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ тăвансенчен ан татăлччăр, ачусен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Эпир сана яланах юрататпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр. Çирĕп сывлăхпа, телейпе санăн пире нумай-нумай çул савăнтарса пурăнмалла пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем, кӳршисем.**

Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Мăн Шаптак ялĕнчи **Анатолий Калистратович КАСЬЯНОВА** пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе, ырлăх-сывлăх сунса пурнăçĕнчи паллă кунĕ ячĕпе – 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.**